# ХЫҪ СӐМАХ ВЫРӐННЕ

ПЕТĔР Хусанкайпа Геннадий Айхи, вĕсен чăваш литературинчи тата пурнăç хутшăнăвĕсем – уйрăм калаçăва тивĕçлĕ тема. Кунта эпир çак "темăн" чи малтанхи самантне куратпăр. 16 çул та тултарайман çамрăк, сăвăç пулма ĕмĕтленекен Лисин /П.Хусанкай унăн пĕрремĕш сăвă кĕнекин – "Аттесен ячĕпе" – редакторсенчен пĕри пулнă май, унăн "хреснашшĕ" пулса ăна Айхи ятне йышăнма хистенĕ/, çак çырăва ăсатать. Кайран, çав çулах вĕсем Шупашкарта тĕл пулаççĕ, çак сăнра ӳкерĕнеççĕ. Вĕсен çыхăну çирĕм çула яхăн тăсăлать, П.Х. çак тĕнчерен уйрăлса кайиччченех /1970, пуш, 4/. Мускавра е Шупашкарта тĕл пулнă, калаçнă, 1964 çулта В.Маяковский Музейхваттерĕнче пĕрле сăвă каланă, çыру çӳретнĕ. Мĕнле савăннă пулĕччĕ Г.Айхи кăçал П.Хусанкай 100-çуллăхне çавăн пек анлăн та чыслăн паллă тунишĕн. Анчах вăл хăйĕн сăввипе /ăна алă çул каялла çырнă пулсассăн та/, хăйĕн сăмахĕпе çак уява хутшăнать. Эппин, Петĕр Хусанкайпа Геннадий Айхин чун çыхăнăвĕ, вĕсем иккĕшĕ сăваплă, чăн çĕрте пулсан та, татăлман. "Сăвăçа – сăвăçран" сăвăн малтанхи вариантĕнче /ăна Айхи шăпах хăйĕн пĕрремĕш кĕнекине Хусанкая парнеленĕ чухне çырнăччĕ/ ку варианта кĕмен çавăн пек йĕркесем пур:

Çапла – вĕрентекен ăс-халĕ
Улшăнатех вăл – ятсенче...
Анчах – виличченех çуталĕ
Çак ăс вĕсен элчелĕнче...

Çапла ĕмĕрлĕх пурнăç йĕрки.

■ **Атнер ХУСАНКАЙ**